# Майăн 9-мĕшĕ - Çĕнтерÿ кунĕ

Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 52 (4621) *1998 çулхи май (çу) уйăхĕн 9-мĕшĕ, шăматкун* *Палăртнă хакпа.*




## Мир, Телей, Тăнăçлăх!



*Хисеплĕ ветерансем!*

*Çĕнтерÿ кунĕ пирĕншĕн уйрăмах хаклă, пирĕн ăнланулăха вăл Тăван çĕршывăмăрăн ирĕклĕхне тата никама парăнманлăхне сăнласа панипе кĕрсе юлнă. Çĕнтерÿ кунĕ - Сирĕн яшлăхăрăн, паттăрлăхăрпа хăюлăхăрăн уявĕ! Сиртен кашни паян пирĕн нумай нациллĕ халăхăн историне, унăн çирĕп хăватне, çутă ĕмĕчĕсене, вилĕмсĕр идеалĕсене малалла илсе пыракан пулса тăрать.*

*Çĕнтерÿ кунĕ вăл - вилнисене, çапăçу хирĕсенче ĕмĕрлĕхе выртса юлнисене хурланса асăннă кун та тата тылра чăннипех паттăрла вăй хурса, çав çутă уява çывхартнисене чысланă кун та.*

*Хаклă ветерансем! Пурнăçăн кашни саманчĕн пĕлтерĕшне эсир кăна тарăн та туллин ăнланатăр тата вĕсене çĕнĕ ăрăва чăтăмлăн та тÿсĕмлĕн, çине тăрса вĕрентме ывăнмастăр. Халь , Сирĕн ачăрсемпе мăнукăрсем пурнăçри ансат мар ĕç-хĕле хăйсем çине илчĕç: вĕсем тырпул ÿстереççĕ, Тăван çĕршывăмăрăн чиккисенче сыхă тăраççĕ, çĕр пуянлăхне кăлараççĕ, çынсен сывлăхне сыхлаççĕ, ытти сферăсенче ÿсĕмсем тăваççĕ... Пире вара нумай ĕçсенче Эсир, хисеплĕ ветерансем, пулăшнинчен тата ырланинчен хаклăрах та тĕрĕсрех виçе çук. Аслă Çĕнтерÿшĕн эпир пурте Сирĕн умăрта пысăк парăмра. Тайма пуç Сире!*

*Сире, шурă çÿçлĕ паттăр ветерансене, Аслă Çĕнтерÿ уявĕпе саламласа, чун-чĕререн çирĕп сывлăх, паянхи уяври пек çĕкленÿллĕ кăмăл-туйăм, савăнăç, мир сунатăп.*

*Ĕмĕрĕр вăрăм та телейлĕ пултăр, хăвăрăн сывăх çыннăрсем сирĕншĕн тăрăшнине яланах туйса тăрăр, сĕтелĕр çăкăр-тăварпа тулăх пултăр.*

*Ф.С.СИБАГАТУЛЛИН,*
*Нурлат районĕпе Нурлат хулин администраци пуçлăхĕ, халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕн председателĕ.*

## Президент саламлани

**Хисеплĕ Фатих Саубанович!**

**Сире тата Нурлат районĕн мĕнпур ветеранĕсемпе ĕçченĕсене Çуркуннепе Ĕç уявĕ ячĕпе - Майăн 1-мĕшĕ тата Аслă Çĕнтерÿ кунĕпе чун-чĕререн саламлатăп.**

**Сире çирĕп сывлăх, телей, ĕçре сулмаклă ăнăçлăхсем сунатăп!**

Тутарстан Республикин Президенчĕ
М.Ш.ШАЙМИЕВ.

**Администраци пуçлăхĕ ячĕпе уявсемпе саламласа янă телеграмма çаплах Президент Аппарачĕн ертÿçинчен Х.М.НИЗАМОВРАН килнĕ.**

## Телеграммăсенче - чун-чĕререн ырă сунни

Администраци пуçлăхĕ **Ф.С.Сибагатуллин** ячĕпе çаплах **"Татнефть" АО генеральнăй директорĕнчен Р.Г.Галеевран** саламлă телеграмма килнĕ. Унта çакăн пек йĕркесем пур: "Хисеплĕ Фатих Саубанович! Тутарстан нефтяникĕсен ятĕнчен çуралнă кун ячĕпе ăшă салам йышăнăр. Пурнăçăр савăнăçпа тулли пултăр, ĕçĕр яланах ăнса пытăр!

Çак самантпа усă курса эпир Сире питĕ хисепленине пĕлтеретпĕр, Сире тата Сирĕн çывăх çыннăрсене чун-чĕререн çирĕп сывлăх, çемйĕре телей, тăнăçлăх, творчествăлла вăй-хăват тата ĕçре ăнăçлăхсем сунатпăр".

**Павлă районĕпе Павлă хулин администраци пуçлăхĕн Н.Ш.Зариповăн** телеграмминче çакăн пек йĕркесем пур:

"Хисеплĕ Фатих Саубанович! Пĕтĕм чун-чĕререн Сире çуралнă кун ячĕпе саламлатăп. Нумай çул хушши Эсир маншăн ертÿçĕ кăна мар, пурнăç шкулĕнчи учитель-наставник пулса тăратăр. Хăвăрăн пĕтĕм опытăра, пĕлĕвĕрсене юратнă ĕçе халаллатăр. Сире эпĕ çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хăват, ĕçĕрте ăнăçлăхсем сунатăп".

Çуралнă кун ячĕпе администраци пуçлăхне **Раççейри промышленниксемпе предпринимательсен союзĕ** ăшă сăмахсем халалланă. Унта çапла каланă: "Эпир шутланă тăрăх, Сире ăс-тăн енчен пуян та телейлĕ çынсен шутне кĕртме пулать, шăп çак пахалăхсемпе палăракансем хастар ĕçлеме пĕлеççĕ. Эсир хăвăртан хытă ыйтатăр, çав вăхăтрах хисеплетĕр, хăвăрпа пĕрле вăй хуракансене ĕçе явăçтарма пултаратăр.

Малашлăх çинчен шутлама, хăть мĕнле ĕçĕн экономика никĕслĕхне тата хуçалăх енчен пысăк пĕлтерĕшне пĕлни пуçаруран, пысăк пĕлÿлĕхрен килет. Шăпах çакăнпа ĕнтĕ Эсир творчество çынни пек палăрса тăратăр, шăпах çакă Сире ăнăçлăх кÿрет. Эпир шутланă тăрăх, Сирĕн ăнăçлăхăрсене чылай ертÿçĕсем лайăхпа ăмсанаççĕ. Çавăнпа та Эсир ертсе пыракан район Тутарстан Республикинче чи лайăххисенчен пĕри шутланать, паллах ĕнтĕ, Раççейре те, çав шутра тырă ÿстерекен регионсенче, ял хуçалăх кăтартăвĕсенчен хăшĕ-пĕринпе вара - чи лайăххи.

Малашне те Сирĕн районăр ĕçре ÿсĕмсемпе çĕнтерÿсем тутăр. Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе тата çутă уявпа - Аслă Çĕнтерÿ кунĕпе хĕрÿллĕ салам йышăнăр".

## Аслă Отечественнăй вăрçăн хисеплĕ ветеранĕсем!

**Районти çар комиссариачĕ Сире пысăк уявпа - Çĕнтерÿ кунĕ ячĕпе саламлать. Çулсем иртеççĕ, анчах ку событи хăйĕн уйрăм историллĕ пĕлтерĕшне нихăçан та çухатмĕ. Сире эпир çирĕп сывлăх, хавхалануллă кăмăл сунатпăр. Сирĕн пурнăçăр яланах çутă пултăр, чи хаклă ĕмĕтĕрсем пурнăçланччăр!**

**Районти çар комиссарĕ Ф.САДРЕЕВ подполковник.**

## Ĕмĕрех мухтавпа асра пулччăр

### Ветерана сăмах

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче ирхине пирĕн Тăван çĕршывăмăрăн чиккисем тамăка çавăнчĕç: фашистсен Германийĕ пире хирĕç 5 миллион ытла салтак, вуншар пин танк, орудисем, самолетсем, карапсем тата ытти çар техники тăратрĕ. Пирĕн халăха каласа пĕтерме çук асап килсе çапрĕ, анчах та фашистсем шутланă пек пулмарĕ, вăл парăнмарĕ, тăшмана хирĕç кĕрешме пĕрлешрĕ.

Тепĕр кун ирех хĕрарăмсем хăйсен мăшăрĕсемпе ывăлĕсем валли кутамккасем хатĕрлеме пуçларĕç, çапăçакан çара - вăрçа массăлла ăсатасси тытăнчĕ, çĕр-çĕр арçын вара хăйсен ирĕкĕпе кайрĕ.

Тăвата ывăлне, мăшăрне тата хĕрне фронта ăсатнă аннен сăнарĕ яланлăха асра юлчĕ. Манăн пичче, 1925 çулта Чиешне ялĕнче çуралнă Владимир Дмитриевич Дмитриев яланлăхах Смоленск çĕрĕ çинче выртса юлчĕ. Çут тĕнчере вăл 19 çул та пурăнаймарĕ...

Этемлĕх историйĕ нумай вăрçă курнă, тĕрĕссисене те тĕрĕс маррисене те. Ку вăрçă вара ытла та йăнăш пулчĕ. Анчах та совет халăхĕ фашистсене тĕппипех çĕмĕрсе тăкса тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтартнине хăшĕ-пĕрисем манаççĕ.

Хăш-пĕр "летописецсем" Аслă Çĕнтерÿпе совет халăхĕн паттăрлăхĕн пĕлтерĕшне хурланине илтсен пирĕн, ветерансен, куççуль тухать. Вĕсем питĕ йăнăшаççĕ. Пирĕн халăх Çĕнтерĕвĕ - ĕмĕрлĕхе çĕнсе илнĕ Çĕнтерÿ.

Вăхăт малалла шунăçем пирĕн нумай нациллĕ халăхăн çĕнтерĕвĕ çутăран та çутăрах ялкăшасса эпир çирĕп шанатпăр. Çавăнпа та хамăн ентешсене - вăрçă ветеранĕсене, Мускавпа Сталинград, Ленинградпа Севастополь, Орелпа Курск Пĕккинче тата Днепр çинчи çапăçусене хутшăннăскерсене, çапла калас килет: фронтовиксем, хăюлăхшăн, паттăрлăхшăн, Тăван Çĕршыва юратнăшăн тав сире! Нумайăшĕ çапăçу хирĕсенче выртса юлчĕç - вĕсен ячĕсене эпир ĕмĕрех асра тытăпăр, сывă юлнисене - тайма пуç!

Астăвăм çинчен каласан, Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хĕрарăмсем мĕнле паттăрлăх кăтартни çинчен асăнмасăр хăварма юрамасть.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Хăна юррисем

## Ярас килмест кучăм умĕнчен

Ылтăн-кĕмĕл лайăх тыткалама,
Пурçăн тумтир лайăх тăхăнма.
Айванах пуçăмпа шухăшласан,
Хамăр тăван лайăх пурăнма.

Тарăн шыва чăмрăм ăшăх тесе,
Мерчен сапакисем пур тесе.
Çакă киле килтĕм, ай, савăнса,
Хамăрпа пĕр тăван пур тесе.

Ушкăн кăна ушкăн чавка ушкăнĕ
Хăш укăлчи çине ларĕ-ши?
Тăвансем пĕр çĕре пухăннă чух
Хăшĕн умне тăрса юрлам-ши?

Хупахăн майрисем, ай, çу пекех,
Хупах эрехĕсем пыл пекех.
Ĕçĕпин те ĕçĕм, ай, юлать-çке,
Ĕçмесен те ĕмĕр иртет-çке.

Ĕçрĕм кăна ĕçрĕм - ÿсрĕлмерĕм,
Ĕçкĕç иккен манăн çамрăк пуç.
Выртрăм кăна выртрăм - çывраймарăм,
Шухăшлă иккен манăн çамрăк пуç.

Хурлăхансем хура, ай, пиçеççĕ,
Пире кайма вăхăтсем çитеççĕ.
Кĕтсе илтĕм çухрăм та çурăран,
Ярас килмест куçăм умĕнчен.

Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.

## Урок пултăрччĕ

"Вăрçă" - хăрушă сăмах
Тĕнчене час саралчĕ.
Совет çынни харăсах
Тăшмана хирĕç тăчĕ.

Гитлер вăрçăпа килчĕ:
Çĕршыва хыпрĕ пушар.
Совет халăхĕ илчĕ
Хăй аллине хĕç-пăшал.

Ваттисемпе çамрăксем
Тăчĕç харăс пĕр çын пек.
Тарĕç тапăнакансем
Вилĕм тупĕç пурпĕрех.

Рабочисем заводра
Вăйлă хĕç-пăшал турĕç.
Çĕр ĕçченĕсем уйра
Фронтшăн ÿстерчĕç тырă.

Шывра, çÿлте, çĕр çинче
Пирĕн иксĕлми хăват.
Пĕлĕр: Берлин хулинче
Фашистсене тĕп тăвать.

Мĕн тăвас тен, вăрçăра
Çухату та сахал мар:
Хула, ял юлчĕç çара,
Çынсем вилчĕç мильоншар.

Тăшмансене тĕп тума
Берлина та илтĕмĕр.
Ыттисем асра тытма
Урок пултăр терĕмĕр.

Вăрçă вучахĕ халь те
Амаланать кашни кун.
Хулара, ялта, хирте
Тĕк-тăмалах юхать юн.

Хĕв.САВГАЧЕВ.

## Пĕлтерÿсем

*ВАЗ-2108 сутатпăр. Телефон: 2-25-74.*

* * *

*Анат Нурлатра çурт сутăнать. Адрес: Циолковский урамĕ, 7-45.*

* * *

*Кăрмăшра пĕр пÿлĕмлĕ хваттер (пĕчĕк çемье пурăнмалли) тата Суворов урамĕнчи кивĕ çурт сутăнаççĕ. Телефон: 5-20-68.*

* * *

*Больница çывăхĕнче дача сутăнать. Пĕчĕк çурт, пусă пур. Телефон: 2-25-09.*

* * *

*1994 çулта туса кăларнă ВАЗ-21043 сутатпăр, хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Телефон: 5-18-09.*

* * *

*"Надежда" патшалăх предприятийĕн ателйинче анлă ассортиментпа сутма тата çĕлеме çак пусма-тавар пур: креп-çăм, креп-атлас, шифон, велюр, çаплах тÿмесем, арçын костюмĕсен пысăк размерĕсем. Çак таварсене эсир "Бытовик" магазинта туянма пултаратăр, хакĕсем йÿнĕ.*

* * *

*Чугун çул çинчи Красноармейская урамĕнчи ача-пăча садĕ çывăхĕнче пур енчен те хăтлă икĕ пÿлĕмлĕ хваттер сутатпăр. Телефон: 2-16-28.*

* * *

*1995 çулта туса кăларнă ВАЗ-21083 васкавлă сутатпăр. Телефон: 2-21-08.*

* * *

*"Москвич-412" сутатпăр. Адрес: К.Маркс урамĕ, 9а-23.*

* * *

*Лайăх шайри "Ява" мотоцикл сутатпăр. Адрес: Садовая урамĕ, 2а-1.*

* * *

*БМВ-525 сутатпăр. Телефон: 5-27-89.*

* * *

*Никĕслĕ çĕр участокĕ сутатпăр. Телефон: 5-16-50.*

* * *

*Рамиль Камилович Гимранов ячĕпе панă документсене тупакана Московская урамĕнчи 5-мĕш çуртри 71-мĕш хваттере тавăрса пама ыйтатпăр, парне пулать.*

* * *

*Дружба урамĕнчи 64-мĕш çурт çывăхĕнче çухатнă "Нокия" телефон аппаратне Дружба урамĕнчи 64-мĕш çуртри 7-мĕш хваттере тавăрса пама е 5-17-33 номерлĕ телефонпа шăнкăравласа пĕлтерме ыйтатпăр, парне пулать (аппаратпа усă курма çук).*

* * *

*1995 çултанпа усă куракан ВАЗ-21063 сутатпăр. Адрес: К.Маркс урамĕ, 2-28, телефон: 5-32-61.*

* * *

*Чугун çул ĕçченĕсен "Локомотив" юлташлăхĕнче дача сутăнать. Адрес: Линейная урамĕ, 19-1.*

* * *

*1997 çулхи май уйăхĕнче туса кăларнă çĕнĕ ВАЗ-21213 автомобиль сутăнать. Телефон: 2-26-59.*

* * *

*Вĕллесем (пыл хурчĕсемпе пĕрле) сутатпăр. Адрес: Гоголь урамĕ, 27.*

* * *

*Апат-çимĕç магазинĕсем валли сивĕтекен витринăсем, ларсем, "Стинол", "Норд", "Минск" холодильниксем, сивĕтекен камерăсем, 17 тĕрлĕ холодильник сутатпăр. Кĕпе-йĕм çумалли "Аристон", "Индезит", "Ардо" машинăсем пур. Тÿлевсĕрех леçсе паратăр.*

*Заказсем йышăнатпăр, çаплах йывăçран, пластикран тунă алăксемпе чÿречесем сутатпăр. Адрес: "Альянс" магазин (апат-çимĕç пасарĕ), "Елена" магазин (япаласем сутакан пасар). Телефон: 5-41-19.*

* * *

*Хăвăрăн материалăртан çуртсем, гаражсем тăватпăр (паха). 5-16-25 номерпе шăнкăравласа Назипа ыйтмалла.*

Спорт * Спорт * Спорт

## Наци кĕрешĕвĕ

Апрелĕн 25-26-мĕшĕсенче пирĕн çамрăк кĕрешÿçĕсем Арск хулинче иртнĕ республика ăмăртăвĕсене хутшăнчĕç. Унта зонăсем тăрăх суйласа илнĕ чи вăйлă 10 команда ăмăртрĕ. Хĕрÿ кĕрешÿре нурлатсем 5-мĕш вырăн йышăнчĕç. Хутшăннисенчен кашни хăй тивĕçлĕ кĕрешÿçĕ пулнине кăтартрĕ, анчах мала тухнисене уйрăм палăртас килет. Çапла, Давлетгаров (Анат Нурлатри шкул) хăйĕн виçе категорийĕнче 1-мĕш вырăн йышăнчĕ, Зартынов вара - 3-мĕш вырăн (хулари 4-мĕш шкул). Эпир яшсене спортра çитĕнÿсем тунипе саламлатпăр тата малашне те ăнăçлăхсем сунатпăр.



Р.РАХМАТУЛЛИН,
ДЮКФП тренерĕ.

## Футбол

Май уявне район футболисчĕсем Якуркел ялĕнчи футбол хирĕнче кĕтсе илчĕç, унта блиц-турнир иртрĕ.

Пĕрремĕш тĕлпулура "Нурлат-нефть" НГДУ тата НУРБ командисем хушшинчи вăйă никам çĕнтерейменнипе 0:0 шутпа вĕçленчĕ. Пенальтипе НГДУ команди вăйлăрах пулчĕ, тепĕр тура тухрĕ.

Унтан хуралтусем якуркелсене 1:0 шутпа çĕнтерчĕç, "Спартак" (сахăр завочĕ) "Правда" ассоциацие - 5:0 шутпа.

Çурма финалта хуралтусем "Спартака" 2:0 шутпа çĕнтерсе финала тухрĕç. Финалта НГДУ тата Хуралту командисем тĕл пулчĕç. Хĕрÿ вăйăра Юрий Никитин пĕртен-пĕр мечĕк тапса кĕртсе, нефтяниксем çĕнтерчĕç. Вăйă вĕçленсен икĕ командăна та парнесем пачĕç тата грамотăсемпе наградăларĕç.



Х.ФАТУЧЕВ.

## Çу уйăхĕнчи паллă кунсем



**6. Çурхи Якур кунĕ.** Кĕтÿçĕсен уявĕ - малтанхи хут кĕтÿ кăлараççĕ. Çак эрнере чĕкеçсем вĕçсе килеççĕ.

**7. Евсей кунĕ.** Малашне тата 12 кун хушши тăм ÿкме пултарать.

**8. Марк кунĕ.** Вăрманти юрлакан кайăксем пысăк ушкăнсемпе килме тытăнаççĕ.

**11. Максăм кунĕ.** Чирлĕ çынсене хурăн шывне ĕçтерсе сиплеме пуçлаççĕ.

**13. Иаков Апостол кунĕ.** Çĕрле тÿпе çăтăрлă-тăк - тулăх тыр-пул кĕт. Ирхине хĕвел йăлтăркка тухсан, çулла типĕ çанталăк пуласса.

**14. Лаша кÿлекен Еремей кунĕ.** Çак кун сăлпăранлă пулсан, хĕлле шартлама сивĕ кĕт. Чи кахалли те сухана тухать. Кунĕ лайăх пулсан, тыр-пул пуçтарса кĕртмелли вăхăт ырă пуласса шантарать.

**15. Бориспа Глеб тырă акаççĕ,** тенĕ авал çак кун. Шăпчăк кунĕ - шăпчăксем юрлама тытăнаççĕ, çур - пĕтме, çу çитĕнме пуçлать. Каçхине вăрмана шурă шăпчăк шырама каяççĕ: ăна кураканни телейлĕ пулать имĕш.

**16. Симĕс апат пĕçерекен Мавра кунĕ.** Малтанхи хут вĕлтрен-пултран яшки пĕçерсе çиеççĕ. Чăрăш лăсси çитĕнме пуçлать.

**18. Калча лартакан Чĕкеç кунĕ.** Хăяр, купăста лартаççĕ, пăрça акаççĕ.

**22. Çурхи Микула кунĕ - курăк кунĕ.** Ĕнесене çимелĕх курăк çитĕнет.

**24. Йĕпе Мокей кунĕ.** Йĕпесапа пулсан, çăвĕпех çавăн пек пулмалла, уяр кун пулсан - çулла та çавăн пек.

**26. Лукери кунĕ.** Вăрăм тунасем тапăнма пуçлаççĕ, эмел курăкĕсем пухма тытăнаççĕ.

**27. Çитăр кунĕ.** Сивĕсем иртсе пĕтеççĕ. Çак кун çурçĕртен сивĕ çил пулсан, çăвĕпех çавăн пек пулма пултарать.

**28. Айăка ăшăтакан Пахом кунĕ** ăшă пулсан - çăвĕпех çавăн пек. Кая юлнисем сĕлĕ тата тулă акаççĕ.

**31. Сĕлĕ Федочĕн кунĕ.** Ăшă çанталăк пуçланать; юлашки юмансем те çулçă сараççĕ. Федот кунĕ тĕлне юмансем çулçă кăларса çитерне-тĕк, сĕлĕ ăнса пулмалла.

## Пурнăçран илнисем

* *Пăтă çиме шăл кирлĕ мар.*
* *Сад пахчи килĕшмесен шăпчăк та юрламасть.*
* *Юрату куçран пуçланать, чĕрере упранать.*
* *Юратăвăн куçĕ çук, çапах пурне те курать.*
* *Юрăпа пурнăç чĕрĕлет.*
* *Этемĕн кăмăл-сипечĕпе характерĕ куçсенче палăраççĕ.*
* *Хитрипе пасара кайма, ăслипе пурнăç пурăнма лайăх.*
* *Хитре - хĕрĕх çулччен, ырри - ĕмĕр иртиччен.*
* *Ăсли тăвалла тĕртет, ăссăрри анаталла сĕтĕрет.*
* *Куçа пур япала та илĕртет, чĕре çеç суйласа илет.*

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860.